28-мĕш çул тухать. Ханĕ 20 пус.

1945
ДЕКАБРЬ
26
ЮНКУН
251 (7002) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Советĕн тата Шупашкар хулин Совечĕн хаçачĕ

ВЫРĂНТИ ХАÇАТСЕМ СУЙЛАВА ХАТĔРЛЕНЕС ĔÇРЕ

Пĕтĕм Совет çĕршывĕ хамăр государство влаçĕн аслă органне—СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет. Çакă пĕтĕм тĕнчипе палăрса тăракан политикăллă питех те пысăк кампани совет сыпписен ĕçри хастарлăхне, политикăллă активлăхне вăйлăн ӳстерчĕ. Ĕççыннисем вăрçă суранĕсене хăвăртрах тӳрлетсе çитерессишĕн, хамăрăн юратнă Тăван çĕршыва татах та ытларах хăватлантарассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Халăхăн хĕрӳллĕ пултарулăхĕпе пуçарулăхĕ иксĕлми çăлкуçĕ пек тапса тăрать. Пур çĕрте те суйлав умĕнхи ăмăрту сарăлса кайрĕ.

Суйлава хатĕрленес ĕçре вырăнти хаçатсем—райхаçатсемпе стена хаçачĕсем, яланхи пекех, пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсен ĕççыннисене Сталинла Конституцин аслă принципĕсене, суйлав законĕсемпе йĕркисене тĕплĕн ăнлантарса памалла, рабочисен, колхозниксемпе колхозницăсен политикăллă активлăхне татах та ытларах ӳстерессишĕн тăрăшмалла, чи лайăх пропагандистсемпе агитаторсен, коммунистсемпе комсомолецсен ĕçне çутатса пымалла, ĕçри çитменлĕхсене вăхăтра тăрă шыв сине кăларса, вĕсене тӳрлетме пулăшмалла. Çакна чылай райхаçатсемпе стена хаçат редакторĕсем ăнланса илнĕ ĕнтĕ.

Анчах çав вăхăтрах вĕсен хушшинче пурнăçран кая юлса пыракан е хăйсен ĕçне çиелтен кăна тăвакан çынсем те пур-ха. Хăшпĕр районри хаçатсем, суйлав çинчен официальнăй материалсем пичетленипех лăпланса лараççĕ. Колхозниксен чи çывăх юлташĕ пулас вырăнне, вĕсем колхоз пурнăçĕнчен аякра тăраççĕ; колхозниксемпе парти хушнă пек, парти чĕлхипе калаçас вырăнне, никам чĕри патне пыман бюрократла, типĕ чĕлхепе калаçаççĕ.

Акă, çăмахран, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçат СССР Верховный Советне суйласси çинчен официальнăй документсем çырса кăларписĕр пуçне, пĕр умстатья тата 5—6 заметка пичетленипех лăпланса ларнă. Ку хаçатăн хăшпĕр номерне пăхсан, редакци суйлав çинчен мĕн çырмаллине те пĕлмен пекех туйăнать. Çапла «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатăн ноябрĕн 16-мĕшĕнчи номерĕнче участкори халăх судьин Микушкин юлташăн «Ял Советсен ĕçне лайăхлатмалла» ятлă статьине пичетлесе кăларнă. Кунта ял Совечĕсен Конституци тăрăх пăхнă ĕçĕсем çинчен те, вĕсем «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» ăнлантарса пама тивĕçли çинчен те çырнă. Анчах статьăн виçĕ пайĕнчен икĕ пайне «уйăрлакансен пурлăх описĕ» мĕнле тăвасси çинчен çырнипе тултарса лартнă. Мĕне кирлĕ пулнă-ха «уйăрлакансен пурлăх описĕ» çинчен çырнă çĕрте суйлав законне асăнни? Çакна ăна ниепле те ăнланма çук. Çав вăхăтрах, декабрĕн 5-мĕшĕнчи номерте редакци Сталинла Конституци çинчен çырнă умстатьяра çитес суйлав пирки пĕр сăмах та асăнман. Чăннипех те ĕнтĕ редакци хăй мĕн тунипе хăй те пĕлмест. Ноябрĕн 29-мĕшĕнче çак хаçат суйлав законне ăнлантарса парас пирки уместатья çырнă. Анчах редакци хăйĕн вулакаçĕсемпе мĕнле калаçнипе пĕр тĕслĕхпе çеç кăтартса парар. «Сăмăкçем хушшинче нимĕнле палăрчăкларах ĕç çуккине паянах чухласа илес пулать», тесе çырать хаçат.

Çук, агитаторсен çак хаçатран витĕмлĕ чĕлхе çаврăнăçне вĕренесси çинчен чăннипех те ĕмĕтленме кирлĕ мар. Кунта агитаци чĕлхин пĕр хĕлхемĕ те çук.

Районри хаçатсем хушшинче суйлав пирки чĕрĕ те витĕмлĕ материалсем пичетлеме мар, официальнăй документсене те пăтраштарса пичетлекенсем пур. Ку тĕлĕшпе ӳкерăмăнах Çĕрпӳ районĕнчи «Сталинец» хаçат палăрса тăрать. Вăл хăй пичетлекен материалсем тĕрĕссипе тĕрĕс маррине вăхăтра пĕлме тăрăшмасть, йăнăша хаçат пичетленсе тухсан тин асăрхать.

Вăрмар районĕнчи «Хĕрлĕ Ялав» хаçат суйлав пирки çырнă хăйĕн уместатьисене ытларах пĕтĕмĕшлĕ сăмахсемпе тултарать. Декабрĕн 13-мĕшĕнчи уместатьяра хаçат: «агитаторсене уйăрса хумалла, вĕсен пĕлĕвне ӳстерме пулăшмалла»; «тупса памалла», «анлăн усă курмалла», «лекцисем тумалла», «докладсем итлеме чĕнмелле» тесе çырса кайнă. Çак ĕçсене камăн, хăçан, мĕнле тумаллине хаçат кăтартса памасть.

Чылай райхаçатсем плансăр, хăйсем тума тивĕслине тимлĕн ăнланса илмесĕр ĕçлени сисĕнет.

Малашне ĕç кун пекăн пулса пытăр тесен, кашни райхаçатăн, кашни стена хаçачĕн суйлава хатĕрленсе ирттерес тапхăр валли çирĕп план туса хурас пулать. Ку планра хаçатăн çитес номерĕсене мĕнле материалсем кĕртессине çеç мар, ялкорсемпе мĕнле организацийĕсем туса ирттерессине те палăртмалла.

Кашни хаçат хальхи вăхăтра районри парти организацийĕн пурнăçĕпе, район пурнăçĕпе, пĕтĕм çĕршыв пурнăçĕпе пĕрле пурăнма тивĕçлĕ. Коммунистсемпе комсомолецсен, агитаторсемпе пропагандистсен, ял Совечĕсемпе суйлав участокĕсен ĕçне куллен тĕплĕн çутатса пыма пĕлес пулать. Райхаçатсем халĕ колхозсенчи стена хаçачĕсене ытларах пулăшмалла.

Хăйсен чĕрĕ те витĕмлĕ чĕлхипе выранти хаçатсен çак суйлав кампанийĕнче чăн-чăн большевикла агитаторсем, коллективлă организаторсем пулса тăмалла. Вĕсен мĕнпур суйлавçăсене коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлама чĕнмелле, суйлав ячĕпе ĕççыннисен производствăллă тата политикăллă активлăхне ытларах ӳстерессишĕн кĕрешмелле.

Çитес суйлаври çĕнтерӳшĕн вырăнти хаçат работникĕсен те пирĕн аслă Совет çĕршывĕнчи мĕнпур ĕççыннисемпе пĕрлех савăнмалла пултăр.

Çĕршыв СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет

ЙĂНĂШСЕНЕ ВĂХĂТРА ТӲРЛЕТМЕЛЛЕ

ИШЛЕЙ. (Телефонпа). Районри ял Совечĕсенче суйлавçăсен списокĕсене хатĕрлес ĕç пырать. Хăшпĕр ял Совечĕсенче çак пысăк та ответлă ĕçе кирлĕ таран хакламаççĕ. Васликасси ял Советĕнчи суйлавçăсен списокĕсене тăвас ĕçе пĕтĕмпех ял Совет секретарĕне шанса панă. Кунта халĕ те суйлавçăсене шута илсе çитермен. Ял Совет секретарĕ Алексеева юлташ «пирĕн шутпа, 290 суйлавçă пулмалла, Хĕрлĕ Çартан таврăннă чылай юлташсене халлĕхе шута илмен-ха», тесе ларать. Кунта списока алфавит тăрăх тума та тытăнман. Ял Совет председателĕ К. Серебрякова юлташ списоксем тăвас ĕç епле пынине интересленмест, вăл ял Советне те сайра хутра çеç пырса каять.

Чаганар ял Советĕнче тунă суйлавçăсен списокĕнче 41 суйлавçăн ашшĕ ячĕсене, 4 суйлавçăн çуралнă çулне, 1 суйлавçăн ячĕпе ашшĕ ятне çырман. «Повырина» çырас вырăне, списокра «Порырина» тесе çырнă.

Ишлей-Покровски ял Советĕнчи суйлавçăсен списокĕнче суйлавçăсем пурăнакан вырăна кăтартса пĕринне çеç ял ятне çырнă, ытти сене тире çеç лартса тухнă. Çапла вара 404 суйлавçă ăçта пурăннине суйлавçăсен списокĕнче палăртман.

Анат-Кинер ял Советĕнче суйлавçăсен списокĕнчи 17 çын хăш çулта çуралнине. 21 суйлавçăн ашшĕ ячĕсене çырмасăр хăварнă.

Ишлей райсовет исполкомĕн списоксем тăвас ĕçри йăнăшсене халех тӳрлетмелле.

В. ГУСЬКОВ.

Укçа пухас ĕçре тунă çитĕнӳсем

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, декабрĕн 25-мĕшĕ. (Телефонпа). СССР Верховный Совет суйлавĕсем ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртура районри финанс работникĕсем çĕнĕ çитĕнӳсем турĕç. Район IV-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана декабрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ.

Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе уйрăмăнах Турхан Упи, Красноармейски, Пшонкă ял Совечĕсем малта пыраççĕ. Вĕсем IV-мĕш кварталти финанс планне кашниех 120 процент ытла тултарнă. **С. ШАДИН.**

СУЙЛАВА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

Пирĕн часри боецсемпе офицерсем Верховный Совет суйлавне пысăк хаваслăхпа хатĕрленеççĕ. Суйлав Положенийĕ хаçатсенче пичетленсе тухсанах ăна вĕренме тытăнчĕç.

Политзанятисенче Совет Союзĕн Конституцийĕпе суйлав Положенийĕ çинчен калаçусем пулса иртрĕç. Хĕрлĕ кĕтесре суйлавçăсене пулăшас тĕлĕшпе суйлав витринисем организацилене, суйлавçăсен списокне курăнмалла вырăна тухса çакнă. Пирĕн хушăмăрта пĕрремĕш хут суйлава хутшăнакансем те чылай, вĕсем хушшинче уйрăм калаçусем иртеççĕ.

А. СЕРГЕЕВ,
Гвардии красноармеецĕ.
Полевая почта 52282

Шупашкар хулинчи интеллигенцин пухăвĕ

Декабрĕн 24-мĕшĕнче Советсен çуртĕнче Шупашкарти интеллигенцин пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухăва ВКП(б) Шупашкар Горкомĕн секретарĕ С. М. Ислюков юлташ уçать.

Ф. Лукин композитор сĕннĕ тăрăх, президиум составне ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕне И. М. Чарыков юлташа, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне З. А. Андреева юлташа, Чăваш АССР Совнаркомĕн Председательне А. М. Матвеев юлташа, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕсене Я. К. Павловна А. С. Вишняков юлташсене тата ытти сене те суйласçĕ.

Кун йĕркинче пĕр ыйту—«СССР Верховный Совет суйлавĕ тата интеллигенци умĕнче тăракан задачăсем». Ку ыйтупа ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ А. С. Вишняков юлташ доклад туса пачĕ.

— СССР Верховный Совет составне пĕрремĕш хут суйлана хыççăн,—тет докладчик,—сакăр çул иртрĕ. Совет çĕршывĕ çĕнĕрен суйлавсем ирттерме хатĕрленет. 1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче совет халăхĕ, каллех суйлав урнисем патне кайса, Ленинпа Сталинăн аслă ĕçне чун-чĕререн парăннă сынсене Верховный Совет составне суйлать.

— Вăрçă çулĕсенче,—тет Вишняков юлташ,—коммунистсен партийĕн халăх хушшинчи авторитечĕ нумай ӳсрĕ. Çитес суйлавсене совет халăхĕ аслă уява кĕтнĕ пек кĕтсе илет.

Малалла Вишняков юлташ Шупашкарти тата республикăри интеллигенци суйлав кампанине активлăн хутшăнни çинчен калать. Большевикла сăмаха пирĕн анлă массăсем хушшине илсе çитермелле, Сталинла Конституци паракан правасемпе обязанноçсене ăнлантарса памалла.

Малалла докладчик çамăксемпе хĕрăмсем хушшинче уйрăмах тимлĕн ĕçлеме кирли çинче чарăнса тăрать. Республикăра суйлава пирвайхи хут хутшăнакан çамăксем 50.000 çынна яхăн шутланаççĕ. Вĕсене суйлав законне вĕрентмелле, ĕлĕкхи тискер пурнăç çинчен каласа памалла, тăван вырăнсен историйĕпе паллаштармалла.

Акă, Шупашкар хулинех илер. 1898 çулта Шупашкарта пурăнакан халăх йышĕ 5.000 çынтан та сахалтарах пулнă. Хулара 13 чиркӳ, 4 шкул пулнă. Хулари библиотека валли çурт та пулман.

Халĕ Шупашкар — промышленноçпа культурăн пысăк центрĕ пулса тăчĕ. Хулара пысăк предприятисем ӳссе çитĕнчĕç, аслă шкулсемпе вăтам шкулсем, театр, кино тата ытти учрежденисем те ĕçлеççĕ.

Малалла докладчик суйлава хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсем пуррине палăртса, çав çитменлĕхсене сывăх вăхăтрах мĕнле пĕтермеллине кăтартса парать.

Пренире чи малтан Глаговский инженер тухса калать, вăл заводри интеллигенци суйлав кампанийĕне ĕçленине паллаштарать. Тăван АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Молодов театр коллективĕ суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе активлăн ĕçленине палăртать.

Жаркова врач суйлава хатĕрленнĕ май халăх хушшинче тĕрлĕ ыйтусемпе лекцисем ытларах тума кирли çинчен калать.

Васильков юлташ агитаци ĕçне йĕркелесси çинче чарăнса тăрать. Пединститут коллективĕ ку тĕлĕшпе ситуллĕксĕр ĕçлени çинчен каласа парать.

Пренире çавăн пекех Харитонов (пединститут), Кашин (завод), Ржанов (искусство управленийĕ) юлташсем тухса калаçĕç.

Юлашкинчен пуху сӳтсе-явнă ыйтупа тивĕçлĕ решени йышăнса хăварчĕ.

Суйлав ячĕпе ăмăртса ĕçлесе

ВĂРМАР. (Хамăр корр.). Мăнăл Хайăрни «Гигант» колхоз колхозникĕсем, СССР Верховный Совечĕн суйлавĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Колхозăн кĕркуннехипе хĕллехи тапхăрта 1690 кубометр вутă хатĕрлесе турттарса тухмалла. Вăл шутран халĕ 1200 кубометр хатĕрленĕ, 600 кубометра яхăн турттарнă. Çак кунсенче колхозниксем вăрман хатĕрлесе турттарма массăллăн тухса кайрĕç. Вĕсем вăрман касса хатĕрлемелли хăйсен сезонри планне 1946 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тата турттарас енĕпе февралĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарма пулаççĕ. Вăрманта Отечественнай вăрçă инваличĕ П. Волков юлташ ертсе пыракан 4-мĕш бригадăри колхозниксем хастарлăн ĕçлеççĕ. Вăрман ĕçлекенсем валли ятларласа столовăй тунă. Вăрмана колхозниксемпе пĕрле агитаторсем те кайрĕç.

Çавăн пекех колхозниксем СССР Верховный Советне суйламалли кун тĕлне çуракине хатĕрленсе çитме пулнă. Çуракине хатĕрленес енĕпе кунта ĕç хĕрӳлĕн пырать. Колхозри тимĕрçĕ К. Васильев ялхуçалăх машинисене юсать. Çуракинче кирлĕ пулакан плугсене пурне те юсанă ĕнтĕ. Хывса хăварнă вăрлăх фондне сортлама тытăннă, хире тислĕк кăлараççĕ тата юр тытаççĕ.

Е. ВОЛКОВ.

Драмкружок ăрман касакансем патĕнче

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Мехлесопунктри комсомолăн пуçламăш организацийĕ СССР Верховный Совет суйлавне суйлама хатĕрленнĕ май драмкружок организацинелĕ. Кружока 15 çын çӳрет, ăна Бокова комсомолка ертсе пырать.

Кружок членĕсем кĕске вăхăт хушшинчех вăрман касакансем хушшинче «Утро», «Ворожея», «Заместитель» пьесăсене тата «Çĕршыва—вăрман» ятлă литература монтажне выляса кăтартнă. Халĕ драмкружок членĕсем СССР Верховный Совет суйлавĕ çинчен А. Кураков хатĕрленĕ литература монтажне выляса пама хатĕрленеççĕ.

П. ТИХОНОВ.

Италипе, Румыпипе, Болгарипе, Венгрипе тата Финляндипе тумалли мирлĕ договорсене çырса хатĕрлесси çинчен

Совет Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Мускаври Канашлăвĕ çакăн пек решени йышăннă:

«Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Великобританин тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствисем çапла пĕлтереççĕ: мирлĕ договорсене ак çак йĕркепе хатĕрлемелли çинчен эпир пĕр-пĕринпе калаçса татăлтăмăр тата Франципе Китай правительствисене çав килĕшĕве хутшăнма чĕнтĕмĕр:

1. Италипе, Румыпипе, Болгарипе, Венгрипе тата Финляндипе тумалли мирлĕ договорсене Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Совечĕ çырса хатĕрлес ĕçе Советăн çак членĕсем çеç хутшăнассĕ: парăнмалли условисене алă пуснисем е, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Советне туса хурасси çинчен Берлинри конференцире йышăннă килĕшĕвĕн условийĕсем тăрăх, çав парăнмалли условисене алă пуснă тесе шутланса тăраканнисем; çак йĕрке ытти членсене хăйсене тӳрех пырса тивекен ыйтусене сӳтсе-явмашкăн Совет ĕçне хутшăнма чĕнинченех законлă пулса тăрать; çапла ĕнтĕ:

А) Италипе тумалли мирлĕ договорăн условийĕсене Великобритани, Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Совет Союзĕн тата Франци Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсем çырса хатĕрлеççĕ;

В) Румыпипе, Болгарипе тата Венгрипе тумалли мирлĕ договорсен условийĕсене Совет Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсем çырса хатĕрлеççĕ;

С) Финляндипе тумалли мирлĕ договорăн условийĕсене Совет Союзĕпе Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсем çырса хатĕрлеççĕ.

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Заместителĕсем Лондонра халех тепĕр хут ĕçлеме пуçлаççĕ, вĕсем Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Совечĕн Лондонри 1-мĕш сессийĕнче сӳтсе-явса калаçса татăлнă тăрăх ĕçлеççĕ.

2. Çав проектсене пурне те хатĕрлесе çитернĕ хыççăн Совет Италипе, Румыпипе, Болгарипе, Венгрипе тата Финляндипе тумалли мирлĕ договорсене сӳтсе-явмашкăн конференци пухать. Çав конференцире Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен Совечĕн 5 членĕ пулаççĕ, çавăн пекех тата Пĕрлешĕнĕ пайсен мĕнпур членĕсем—Европăри тăшманла государствăссене хирĕç пынă вăрçа чылай пысăк вăйпа активлăн хутшăннисем—пулаççĕ, çапла вара унта çаксем пулаççĕ: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Великобританин, Китайăн, Францин, Австралин, Бельгин, Белоруссен Советлă Социализмлă Республикин, Бразилин, Грецин, Голландин, Индин, Канадăн, Çĕнĕ Зеландин, Норвегин, Польшăн, Украинецсен Советлă Социализмлă Республикин, Чехословакин, Эфиопин, Югославин, Кăнтăр Африка Союзĕн представителĕсем пулаççĕ.

Конференци 1946 çулхи майăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр пуханмалла.

3. Конференци ĕçĕ пĕтнĕ хыççăн тата вăл сĕннисене пăхса тухнă хыççăн, Италипе, Румыпипе, Болгарипе, Венгрипе, Финляндипе тунă перемири условийĕсене алă пуснă государствăсем тата Италипе тумалли мирлĕ договор тĕлĕшпе çав перемири условийĕсене алă пуснă союзлă государствăсемпе танлаштарнă Франци хăйсем тума тивĕçлĕ мирлĕ договорсен текстĕсене йăлтах хатĕрлесе çитереççĕ.

4. Çав майпа çырса хатĕрленĕ мирлĕ договорсен йăлтах хатĕрлесе çитернĕ текстĕсене вара конференцие пухăннă государствăсен, договор тăвакан тăшманла государствăпа вăрнăскерсен, представителĕсем алă пусаççĕ.

Унтан тивĕçлĕ мирлĕ договорсен текстĕсене Пĕрлешнĕ ытти написене, договор тăвакан тăшманла государствăпа вăрнăскерсене, параççĕ.

5. Мирлĕ договорсем перемири условийĕсене алă пуснă союзлă государствăсем çирĕплетнĕ хыççăнах, Итали тĕлĕшпе пĕлсен—çав государствăсемпе танлаштарнă Франци те çирĕплетнĕ хыççăнах законлă пулса тăраççĕ.

Мирлĕ договорсене договор тăвакан тăшманла государствăсен те çирĕплетмелле».

* * *

Ытти ыйтусемпе те каласусем туслăн пулса пыраççĕ. Канашлу ĕçĕсене пĕтĕстерсе паракан пĕлтерĕве пĕр-икĕ кун хушшинче пичетлесе кăларма пулĕ тесе шанаççĕ

Гоэлро планĕ 25 çул тултарни

УЧЕНАЙСЕН МУСКАВРИ ÇУРТĔНЧИ ВЕЧЕР

Советсен Пĕтĕм Российăри VIII съезчĕ Российăна электрификацилемелли плана (Гоэлрона) çирĕплетнĕренне декабрĕн 22-мĕшĕнче 25 çул тултарчĕ. Пирĕн Тăван çĕршыв историйĕнчи çак паллă кун ячĕпе декабрĕн 22-мĕшĕнче Ученайсен çуртĕнче вечер туса иртернĕ. Вечерта совет наукипе техникин паллă деятелĕсем, аслă шкулсен профессорĕсемпе преподавателĕсем, столицăри технически интеллигенцин представителĕсем пулнă.

Электрификаци планне пурнăçа кĕртни çинчен Г. М. Кржижановский доклад тунă. Вăл çав историллĕ съездра пулнă, Гоэлро планĕн авторĕсенчен пĕри пулнă. Вăл Ленинпа Сталинăн çĕршыва электрификацилес шухăшĕ мĕнле обстановкăра çуралса аталанни çинчен тĕплĕн каласа панă.

— Гоэлро планне,—тенĕ Кржижановский академик,—аслă ăспа тата малашнехине уçăмлăн курса тунă. Ленинпа Сталин халăха çак плана пурнăçа кĕртме чĕннĕ. Вара, вăрçă хыççăн хуçалăх юхăннине пула тухса тăнă йывăрлăхсем сине пăхса тăмасăр, халăх ырланă çав плана ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ. Çакă вăл Ленин—Сталин партийĕн чăн-чăн чаплă çĕнтерĕвĕ пулнă!

Кржижановский академик хăй В. И. Ленинпа тĕл пулса калаçнипсем çинчен, Владимир Ильич плана туса хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçленĕ ученайсене аслă кăтартусем пани çинчен каласа панине вечерти çынсем питех те пысăк интереспа итленĕ. Докладчик çакна палăртса тунă: энергетикăн хăватлă çĕнĕ çăлкуçĕсене туса хурас, çĕршыв хуçалăхне кучухнехи техника çулĕ сине кăларас ĕçĕн лепнипе идейпе хавхаланса çĕкленнĕ ученайсем, малта пыракан ученайсем Гоэлро планне пурнăçа кĕртес ĕçе питех те пысăк хастарлăхпа тытăннă. Электрификаци Совет Союзне сталинла пятилеткăсен çулĕсенче социализмла индустриализацилес ĕçĕн никĕсĕ пулса тăнă, вăл пирĕн çĕршывăн çарпа экономика хăватне туса хунă индустриализацин никĕсĕ пулса тăнă.

СССР Наука академийĕн член-корреспонденчĕ К. А. Круг Гоэлро планне туса хатĕрлес ĕçе хăй хутшăнса ĕçлени çинчен аса илнисене калака панă; энергетиксен Пĕтĕм Союзри обществин Мускав отделенийĕн председателĕ Б. А. Телешев Советсен Пĕтĕм Российăри съезчĕ электрификаци планне çирĕплетнĕ хыççăн Мускавра энергетика базин мĕнле аталанăсене ӳснни çинчен каласа панă. (ТАСС).

1945 ÇУЛХИ IV-мĕш КВАРТАЛТА ВĂРМАН ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА ДЕКАБРĔН 20-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем	Плана тултарнă (процентпа)		Мĕнле вырăн йышăнать	
	турттарас енĕпе	хатĕрлес енĕпе	турттарас енĕпе	хатĕрлес енĕпе
Пăрачкав	74,3	101,5	1	2
Кувакино	72,3	94,0	2	3
Çĕмĕрле	68,1	68,3	3	9
Чкаловски	66,6	47,3	4	16
Муркаш	47,9	33,2	5	24
Чурачăк	45,1	42,3	6	20
Йĕпреç	43,3	88,9	7	4
Елчĕк	42,1	53,1	8	8
Хĕрлĕ Чутай	41,8	53,4	9	9
Етĕрне	41,4	73,4	10	5
Улатăр	41,1	41,3	11	21
Шăмăршă	40,7	111,7	12	1
Первомайски	39,8	69,0	13	8
Çĕрпӳ	39,4	37,7	14	22
Красноармейски	37,8	45,3	15	18
Октябрьски	36,9	34,4	16	23
Тăвай	35,9	53,1	17	15
Вăрмар	35,3	44,0	18	19
Вăрнар	33,8	72,3	19	6
Элĕк	31,9	20,3	20	30
Сĕнтĕрвăрри	31,2	62,1	21	11
Комсомольски	28,9	57,4	22	12
Советски	28,4	47,2	23	17
Калинино	27,3	67,3	24	10
Куславкка	27,2	28,4	25	8
Шăхасан	22,6	23,4	26	29
Ишлей	18,2	32,8	27	26
Сĕнтĕр	15,7	69,4	28	7
Канаш	15,0	32,9	29	25
Шупашкар	8,6	32,6	30	27

Планран иртерсе

Етĕрне районĕ государствăна тырă памалли плана Октябрь уявĕччене тултарчĕ. Ун хыççăн районри колхозсем планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă парас ĕçе аплăн сарса ячĕç. Палтайри Буденный ячĕпе тăракан колхоз планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 600 пăт, Мартăн 8-мĕшĕ ячĕпе тăракан колхоз 420 пăт, «Париж Коммуни» колхоз 450 пăт, «Пионер» тата «Дружба» колхозсем 480-шар пăт панă. «Пионер» колхоз натуроплата тыррине те аванс шучĕпе 1281 пăт панă. Районри колхозсем планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне пĕтĕмпе 20.132 пăт тырă панă.

Н. ЦВЕТКОВ.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Государство Секретарĕ Бирнс господин ячĕпе тата Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен министрĕ Бевин господин ячĕпе СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин патĕнче пулса иртнĕ апатлану

Ĕнер, декабрĕн 24-мĕшĕнче, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Государство Секретарĕ Д. Бирнс господин тата Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Э. Бевин господин ячĕпе Кремльте СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин патĕнче апатлану пулса иртнĕ.

Апатланура Бирнс господинпа Бевин господинсăр пуçне çаксем пулнă: Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн Яланхи Заместителĕ А. Кадоган господин, Великобританин Совет Союзĕнчи Посолĕ А. Керр господин, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи Посолĕ А. Гарриман господин, Р. Булард, В. Коэн, Д. Конант, Х. Метьюз, Р. Кемпбелл, Д. Картер Винсент, Ч. Болен тата ытти сем те.

Совет Союзĕ енчен апатланура çаксем пулнă: В. М. Молотов, А. И. Микоян, А. А. Жданов, Л. М. Каганович, Л. П. Берия, Г. М. Маленков, Н. С. Хрущев, Н. А. Вознесенский, Н. Е. Косыгин, Н. А. Булганин, адмирал Н. Г. Кузнецов, В. Н. Меркулов, А. Я. Вышинский, В. Г. Деканозов, А. Д. Крутиков, армии генералĕ А. И. Антонов, Совет Союзĕн Великобританири Посолĕ Ф. Т. Гусев, В. В. Кузнецов, Г. М. Попов тата ытти сем те.

Апатлану туслăн та ăшшăн пулса иртнĕ. (ТАСС)

ХРОНИКА

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1945-мĕш çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнчи вырсарникун канас вырăнне 1946-мĕш çулхи январĕн 1-мĕшĕнче ытларикун канмалла тунă.

Наци тата йăла условийĕсене кура кану куне эрнекун туса ирттерекен союзлă тата автономиллĕ республикăсенче 1945-мĕш çулхи декабрĕн 28-мĕшĕнчи эрнекун канас вырăнне 1946-мĕш çулхи январĕн 1-мĕшĕнче ытларикун канмалла тунă

«ЯПОНИЕ ÇĔМĔРСЕ ТĂКНИ» ЯТЛĂ ДОКУМЕНТЛĂ ÇĔНĔ ФИЛЬМ

Декабрĕн 21-мĕшĕнче СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинематографи комитетĕнче «Японие çĕмĕрсе тăкни» ятлă документлă çĕнĕ фильма кăтартнă. Фильм авторĕсем — Сталинла преми лауреачĕсем А. Зархине И. Хейфиц, текстне Е. Габрилович çырнă.

«Японие çĕмĕрсе тăкни» — пысăк фильм. Вăл Совет Союзĕн Япони империалисчĕсене хирĕç пынă вăрçин пĕтĕм историне кăтартса парать. Фильма Забайкальепе Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи фронтсенче тата Лăпкă океанри флотра ĕçленĕ 32 оператор ӳкернĕ. Фильмра çавăн пекех тата японецсем ӳкернĕ кинохроникăри ӳкĕм вырăнсемпе усă курнă.

Фильма пăхакансем ирттĕ вăйлăнчи ĕçсене кураççĕ: Япони Российăна хирĕç 1904 çулта пуçланă пирвайхи агрессин историне, 1918—22 çулсенчи событисене, Инçетри Хĕвелтухăçĕнче Сергей Лазо ертсе пынă мухтавлă партизансен ĕçĕсене кураççĕ. Хасан кӳлли патĕнчи тата Халхин-Гол районĕнчи çапăçусене кăтартса панă.

Япония хирĕç 1945 çулта пынă вăрçа çинчен. Хĕрлĕ Çăран чаплă çĕнтерĕвĕсем—Япони империалисчĕсене пĕтĕмĕшпех парăнтарнă çĕнтерӳсем çинчен каласа парассăн кăвăсем фильмра тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ.

«Японие çĕмĕрсе тăкни» ятлă фильма çыхăхри кунсенчех çĕршывăри киносенче кăтартма пуçлассĕ. (ТАСС)

ЁÇÇЫННИСЕМ ВАЛЛИ КУЛЛЕН КИРЛЁ ТАВАРСЕМ ЫТЛАРАХ ТУСА КĂЛАРАР

А. МАТВЕЕВ,
Чăваш АССР Совнаркомён Председателё

Кирлё пурнăç тапхăрёнчи хуçалăхна политика тёлёнёнчи чи кирлё задачăсенчен пёри вăл—ёççыннисен пурнăçне йăла ыйтăвёсене тивёстерме куллен кирлё таварсем ытларах туса кăларасси пулса тăрать.

Октябрьти социализмлă аслă революцин пулăраннă 28 çул тултарнă çинчен тунă докладра Молотов юлташ: ялтипе хуларн халăх куллен кирлё таварсем ытларах туса кăларассине, çавăн пекех тата ытларах апат-çимёç продукчёсем туса парассине кётет, тесе асăрхаттарса хăварчё.

Пирён республикăри вырăнти промышленноçна кооперацн промышленноçё, апат-çимёç промышленноçне кёртмесен, 1945 çулта ытла та çителёксёр ёçлерёç. Хуласемпне районсенчи 34 промкомбинатран вунă ушăх хушшинчи плана пётём продукци тата куллен кирлё таварсем туса кăларас тёлёпне пурё те 4 комбинат кăна тултарчёç. Первомайски тата Сёнтёрвăрри райпромкомбиначёсем вунă ушăхри плана куллен кирлё таварсем туса кăларас тёлёпне тултарчёç пулин те, пётём продукци туса кăларас тёлёпне хăйсен заданине пурнăçлаймарёç.

Куллен кирлё таварсем туса кăлармалли план ассортиментсем енёпе те çителёксёр пурнăçланса пырать. Вырăнти промышленность предприятийёсем туса кăларма пилăртнă 23 изделирен кăçалхи вунă ушăх хушшинче 5 изделн енёпе кăна плана тултарнă. Ассортимент çинчен плана пёр райпромкомбинат та тултарайман. Ушрăмăнах сётел-пукансем, урăнаçунасем, пёкёсем, катка-пичкесем, çинчка, тăмран чатăк-тирёксем тăвас ёç юлса пырать. Ача-пăчасем валли вылямалли япаласем тăвас тёлёпне вара вунă ушăхри план пурё те 7,5 процент кăна пурнăçа кёнё.

Çавăн пекех куллен кирлё таварсем туса кăларас тёлёпне промысла кооперацн артелёсем те çителёксёр ёçлеççё. Вёсем 1945 çулта иртнё çулхинчен те начартарах ёçленё. Кăçалхи вунă ушăх хушшинче промысла кооперацн артелёсем куллен кирлё таварсем иртнё çулхинчен 7,2 процент чухлё сахалтарах туса кăларнă. Туса кăларма пилăртнă 45 изделирен вёсем плана 5 изделн енёпе кăна тултарнă. Сăмахран, промкооперацн артелёсем вунă ушăхри плана сётел-пукансем енёпе 39,9 процент, катка-пичкесем енёпе 36,5 процент çеç тултарнă. Строительствăра кирлё япаласене: кирпёч, известь тата ытти сене туса кăларас тёлёпне те артельсем кирлё пек ёçлемеççё-ха.

Куллен кирлё таварсем туса кăларас тёлёпне союза пăхăнса тăракан предприятисем те ёçлеме тивёç. Анчах кунта та нимёнле çитёнÿсем те çук-ха. Союза пăхăнса тăракан уйрăм предприятисен руководителёсем хăйсен айăпне: пире Главк куллен кирлё таварсем туса кăлармалли план йрса паман, çавăнпа эпир ку тёлёпне ёçлемен, тесе йăнăтарасшăн. Çакă вăл тёрёс мар. Союза пăхăнса тăракан предприятисен руководителёсем ку тёлёпне хăйсем ытларах пуçарулăх кăтартни кирлё. Союза пăхăнса тăракан предприятисен куллен кирлё таварсем туса кăларас вырăнне хăшпёр промкомбинатсемпне артельсем çăмăлтарах та хăйсене усă парахнан таварсем туса кăларса плана тултарма пăхаççё. Государствăна хирёçле çакăн пек практикăна пётерес пулать. Вырăнти промышленность предприятийёсен ёçне хаклană чух плана укçатенкё çинчен мёнле тултарнине кăна мар, туса кăларахнан продукцин ассортиментчёпе пахалăхё мёнлине те шута илмелле.

Куллен кирлё таварсем хакне пилăртас ёçре çирён йёрке тăвас пулать. Таварсем Пётём Союзра йышăннă хакёсем çук пулсан, пирён Чăваш республикинче вёсене Совнарком кăна пилăртса нама пултарать. Çак йёркене хăшпёр райсовет исполкомёсем пăсса пыраççё. Вёсем, таварсен хакне хăйсем нёлё пек хакласа, Совнарком йышăннă тёрёс хакран чылай ÿстерсе яраççё.

Час-часах тата таварсен хакне предприятисемпне суту-илÿ организацийёсем хăйсем те хаклатса яраççё. Вырăнти промышленноçна кооперацн промышленноçёнчи предприятисен хăйсен тупăшне ÿстерес тесе, материалсемпне чёртаварa перекетлён тытказламалла, таварăн хакне чакарса ныpac пулать; тупăна таварăн хакне ÿстерсе янипе пухса пыни вăл—вырăнсăр янала.

Вырăнти промышленноçна кооперацн промышленноçё лайăх ёçлесси ёççынни депутачёсен райсовет исполкомёсемпне парти райкомёсем тёплён ертсе пынинчен те пумай килет. Анчах та, калас пулать, чылай районсемпне хуласен руководителёсем вырăнти промышленноçна кооперацн промышленноçё çине çиелтен пăхаççё, вёсене иккёмёш вырăна хураççё. Акă, тёслёхрен, Советски районри вырăнти промышленность кăçалхи 9 ушăх хушшинче пурё те 48 пин тенкёлёх кăна продукци туса кăларнă. 10 ушăх хушшинче вăл иртнё çулхи çав вăхăтрнчен 10 процент сахалтарах продукци панă. Кооперацн промышленноçё 190 пин тенкёлёх продукци парас вырăнне кăçал нурё те 92 пин тенкёлёх кăна панă, иртнё çулхинчен 26 процент сахалтарах туса кăларнă. Районри 4 предприятирен плана пёрн те 56 процентран мала тултарайман.

Куллен кирлё таварсем туса кăларас тёлёпне Хёрлё Чутай, Ишлей, Елчёк, Тăвай, Шăмăршă районёсемпне Улатăр хули те çителёксёр ёçлеççё. Асăннă районсен руководителёсем вырăнти промышленноçна кооперацн промышленноçне çаплах çителёксёр ертсе пыраççё. Вырăнти промышленноçна кооперацн промышленноçне ертсе пырас тёлёпне Çёмёрле, Комсомольски тата Йёпреç райсовет исполкомёсем те янăх ёçлеççё. Ку районсенче те плана тултарайман, IV-мёш кварталта та ёçе лайăхлатни сизёнмест. Сăмахран, пёр-пёр предприятне ёç вăй, чёртавар е топливо çитмесен, район руководителёсёр пуçне урăх камха чăн-чăн пулăшу пама пултарăр?

Район руководителёсем вырăнти промышленность предприятийёсене тата кооперацн промышленноçён артелёсене ёç вăй парса пулăшмасёр пуçне, рабочисем нурнăçна йăла условийёсене лайăхлатассишён те çине тăрса ёçлемелле. Ку ыйтăва вара хăшпёр районсен руководителёсем манаçа хăварнă.

Уйрăм районсен ёçё пире çакна кăтартса парать: районри организацисем куллен кирлё таварсем туса кăларас тёлёпне тимлён ёçленё çёрте продукци туса кăларас план та тăлăшах пурнăçа кёрсе пырать. Вăрмар районё кăçалхи 10 уйăхри плана районри промышленность тăрăх 107 процент, кооперацн промышленноçё тăрăх 102 процент тултарнă. Вырăнти промышленноçна кооперацн промышленноçё Етёрне, Сёнтёр районёсемпне Канаш хулинче те начар мар ёçлеççё.

ВКП(б) райкомёсемпне райсовет исполкомёсен вырăнти промышленноçна кооперацн промышленноçён ёçё çине çиелтен тата хаклamасăр пăхассине пётерес пулать. Вёсен хăйсен ёçне промышленность ыйтăвёсемпне тата унăн интересёсемпне таччăн сыхăнтарса туса пымалла. Предприятисемпне артельсене ертсе пырас ёçе тёпрешех лайăхлатмалла, вёсенче партипе комсомол организацийёсем туса, производствăри чи лайăх çынсене парти тата комсомол ретне явăстармалла.

Рабочисем валли вăхăтрaн вăхăта лекницем туса памалла, клубсемпне хёрле кётессен ёçне лайăхлатмалла. Партипе совет организацисем тимлён тата куллен пулăпса пыреан кăна вырăнти промышленноçна кооперацн промышленноçё куллен кирлё таварсем туса кăларасси пе хăвăрт ÿстерёç. Кунăр пуçне, райсовет исполкомёсен пысăкрах ялсенче райпромкомбинатсене пăхăнакан ялти промкомбинатсем организацилемелле. Пирён условисенче ялти промкомбинатсене транспортпа лаша хатёрёсем, урана тăхăнмалли япаласем, тумтирсем, тунă тирсем, сётел-пукансем, ялхуçалăх продукчёсенчен ёçме-çимесем, тикётпе урапа маçёсем тата ытти куллен кирлё япаласем туса кăларас тёлёпне организацилемелле. Ку ёçе колхозсем хăпăл тухăс йышăнёç, ялти промкомбината ёç пăлёне те, туртăм вăйёне те, чёртаварпа та пулăшёç.

Ялта промкомбинатсем уçас ёçе пёр иккёленсе тăмасăрах тытăнас пулать, мёншён тесен вёсенчен вырăнти промышленность та пысăк пулăшу илё, колхозсем те хăйсене кирлё япаласене: урапа-çунасемпне ытти инвентарьсене çителёклё тараш илёç.

Вырăнти промышленность вăл подсобнăй промышленность мар, вăл хăйне уйрăм промышленность. Унăн вырăнти чёртаварсенчен ёççыннисене куллен кирлё таварсем туса кăларас задачăна хăй тёллён пурнăçламалла. Çак задачăна пурнăçланă çёрте вара Союза пăхăнакан заводсен вырăнти промышленноçна техникăллă пулăшу парса тăмалла.

Халё эпир кустарлă майсемпне, алăпа ёçленипне кăна килёпме пултаймастпăр, пирён механизацилле майсемпне тата малта пыракан техникăн çитёнёвёсемпне анлăн усă курас задачăна ытларах та ытларах пурнăçласа пымалла.

Предприятисемпне артельсенчи учетпа отчет ёçне, хуçалăх расчечёпне финанс хуçалăхне сÿллё вырăна лартмасăр ёçре пысăк çитёнÿсем тума çук. Ку ыйтусем çине вара халăхи вăхăтра хăшпёр предприятисемпне артель руководителёсем ытла та сахал çаврăнса пăхаççё. Предприятисемпне артельсем тёрлё йышши тăкаксем курни, вёсен пурлăхне салатни тата çаратни çакăнтан килет те ёнтё.

Куллен кирлё таварсем ытларах туса кăларас ёçе халăхăн анлă массине активлăн янăстарас пулать. Çавăнпа та ёççыннисем хушшинче политикăна воспитани ёçне куллен туса пырасси, рабочисен нурнăç условийёсене лайăхлатасси тата производствăлла канашлу ёçне чёртсе ярасси предприятисемпне артельсем умне халăхи вăхăтра уйрăмăнах çивёччён тухса тăраççё. Ку енёпе вара çак промышленноçенче партипе совет организацийёсем куллен ёçлес пулать.

Халăхи вăхăтра пирён çёршывăн пётём халăх, коммунистсен партийё тата хăйён юратнă çулпуçё Сталин юлташ тавра нихăçанхинчен те таччăнрах пётёçсе, СССР Верховный Советне сÿлама хатёрленет. Совет халăхё сÿлава производствăра çёнё çитёнÿсем тунипе кётсе илет. Промышленноçра ёçлекенсен тата вырăнти партипе совет организацисен халăхи вăхăтри таса тивёçё вăл — вырăнти промышленноçна кооперацн промышленноçё юлса пынипе кёске вăхăтрах пётересси, ёççыннисем валли куллен кирлё таварсемпне апат-çимёç ытларах та ытларах пурнăçласа пымалла.

ВЦСПС-ра

Çăмăл промышленность предприятийёсенче ёçлекен рабочисемпе служащисене апат-çимёç парса тăрас ёçе лайăхлатасси çинчен

ВЦСПС секретариачё çăмăл промышленность предприятийёсенче ёçлекен рабочисемпе служащисене апат-çимёç парса тăрас ёçе лайăхлатасси çинчен постановлени йышăннă.

Государство çăмăл промышленность предприятийёсем валли промышленность таварёсемпне апат-çимёç продукчёсем чылай парать. Рабочи снабжени отделёсем, нумай фабрикăсемпне заводсем подсобнăй хуçалăхсем организацинленё тата ёççыннисене пурнăçра пулăпмалли мастерскойсем уçнă. Подсобнăй хуçалăхсен акакан çёрё 1942 çулта 11.000 гектар пулнă пулсан, 1945 çулта вăл 28.000 гектар таран ÿснё. Нумай предприятисенче рабочисемпне служащисен пахча-çимёçпе çёрулми хёл кăсмалăхах пур.

Анчах та хăшпёр рабочи снабжени отделёсем выльăх-чёрлёх фермисемпне сысна тăрантаракан пунктсем çине сахал çаврăнса пăхаççё.

ВЦСПС секретариачё профсоюз организацийёсене выльăх-чёрлёх ёрчетмелли плансем тунă çёрле активлăн хутшăнма, выльăх-чёрлёх хисепёпне тухăçлăхне ÿстерме тăрăшма хушнă.

Предприятисем тара илсе ёçлесе тăракан çёр участокёсене 1946 çулхи февралён 1-мёшё тёлне çав предприятисене çирёплетсе памалла тата подсобнăй хуçалăхсене аслăлатма çёнё çёр участокёсем илмелле. Килес çул ялан усă куракан çёр пур хуçалăхсенчен çурринче планлă пусуçаврăнăшёсем тумалла. Вырăнти юханшывсенче, кÿлёсенче пулă тытассине 5 хут ÿстермелле. (ТАСС).

ЁЛКСМ Обкомёсе Чăваш АССР Çёрёç Халăх Комиссариатёнче

МТС-сенчи çамрăксен трактор бригадисен, çамрăк трактористсемпне трактористсăсен 1945 ялхуçалăх çулёнчи социализмлă ăмăртăвён итогёсем

Ăмăртăва çамрăксен 95 трактор бригади хутшăннă, вăл бригадăсенче МТС-сенчи 988 çамрăк трактористпа трактористка ёçленё. Çамрăксен 73 трактор бригади тата 616 трактористпа трактористка çулталăкри плана тултарнă е иртнерсе тултарнă. Çамрăк трактористсемпне трактористсăсен, семçе суха çине кусарса шутласан, план тăрăх 105.126 гектар сухаламалла пулнă. Ăмăртса ёçленине пула вёсем 120.000 гектар сухаланă, çапла вара тракторсемпне çулталăк хушшинче ёçлемелли плана 114,1 процент тултарнă. Çав вăхăтрах 68.219 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Ăмăртура çак бригадăсем паха тёслёхсем кăтартнă: Вăрнар МТС-ёнчи **И. А. Алексеев** бригади, вăл бригада трактор-семпне ёçлемелли плана 212 процент тултарнă тата 3.695 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Елчёк МТС-ёнчи **Н. Г. Струнников** бригади плана 215 процент тултарнă, 560 килограмм горючи перекетленё; çак МТС-ри **П. И. Марков** бригади тракторсемпне ёçлемелли плана 193 процент тултарнă, 250 килограмм горючи перекетленё. Çёрпÿ МТС-ёнчи **Н. С. Степанов** бригали плана 204 процент тултарнă, çав вăхăтрах 3042 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

ВЛКСМ Обкомёпе Чăваш АССР Çёрёç Халăх Комиссариачён кусса çÿрекен Хёрлё Ялавне Вăрнар МТС-ёнчи **В. Л. Лукин** юлташ ертсе пыракан бригадăран илсе Вăрнар МТС-ёнчи **И. А. Алексеев** юлташ ертсе пыракан комсомолсемпне самăрăксен бригадине пама йышăннă. Çак бригадăна тата И. Алексеев юлташа ВЛКСМ Чăваш Обкомён Хисеплё грамотипе награддаламалла тунă.

Тракторсемпне ёçлемелли плана 150 процент пытла тултарнă 33 трактор бригали Пётём Союзри ăмăртура иккёмёш вырăна тухнă. Вăл. бригадăсене тата бригадăри çамрăк трактористсемпне трактористсăсене награддалама ВЛКСМ Пентральный Комитечёпе СССР Çёрёç Халăх Комиссариатне тăратнă. Унăн пуçне вёсене ВЛКСМ Обкомён Хисеплё грамотипе награддалама йышăннă.

Ёçре паха тёслёхсем кăтартнăшăн 116 çамрăк трактористпа трактористсăна награддалама ВЛКСМ Центральный Комитечёпе СССР Çёрёç Халăх Комиссариатне тăратнă. Унăн пуçне вёсене ВЛКСМ Обкомён Хисеплё грамотипе награддалама йышăннă.

Çамрăк трактористсемпне трактористсăсен социализмлă ăмăртăвне организацилесе ертсе пырас ёçре Елчёк районёнчи МТС-ри комсомол организацийё (ВЛКСМ комитечён секретарё Н. П. Воинов юлташ), ВЛКСМ Елчёк райкомён секретарё А. П. Павлова юлташ; Çёрпÿ МТС-ёнчи комсомол организацийё (ВЛКСМ комитечён секретарё Т. И. Иванова юлташ); Вăрнар МТС директорё Ф. С. Никонов юлташ тата Елчёк МТС директорё П. А. Ямин юлташ лайăх ёçленипе палăртнă. Вёсене награддалама ВЛКСМ Центральный Комитечёпе СССР Çёрёç Халăх Комиссариатне тăратнă.

ВЛКСМ Обкомёпе Чăваш АССР Çёрёç Халăх Комиссариачё Октябрьски, Сёнтёр, Сивăка, Вăрачкав тата Сёнтёрвăрри МТС-ёнчи самăрăксен бригадисемпне çамрăк трактористсăсене, трактористкăсем ăмăртура çитёнёвёсем ёçленипе палăртнă.

Иран Азербайджанёнчи лару-тăру

ИРАН ГЕНЕРАЛЁ ДАРАХШАНИ КАЛАСА ПАНИ

ТЕГЕРАН, декабрён 22-мёшё. (ТАСС). Тегеранра тухакан «Рахбар» хаçат декабрён 18-мёшёнче «Ферман» хаçатăн редакторё Иранăн Тавризри дивизийён командирёпе Дарахшани генерална калаçнин текстне пичетлесе кăларнă. Дивизири офицерсем, тенё генерал Дарахшани, хăйсен канашлăвёнче, пурте пёр кăмăллă пулса, Иран Азербайджанён правительствине пăхăнма йышăннă. Реакцилё çынсем Тегеранра: халăх Азербайджанри демократиллё юхăмăн тăмасть, тени пёрне те тёрёс мар, тенё Дарахшани. Демократиллё партин членёсем хушшинче, тенё вăл, обществăн тёрлё слойёсен представителёсем нумай.

* * *

ТЕГЕРАН, декабрён 22-мёшё. (ТАСС). Тавризран илнё хыпарсем тăрăх, Маку тата Шахпур хулисенче Иран жандармерийёпе полицийё Иран Азербайджанён национальнăй правительствине хăйсен ирёкёпех пăхăннă.

ИРАНРА ДЕМОКРАТИЛЛЁ ХАÇАТСЕНЕ ХУПНИ

ТЕГЕРАН, декабрён 24-мёшё. (ТАСС). Иранра халиччен демократиллё тăватă хаçата—«Дод», «Иране ма», «Армане милли» тата «Дарья» хаçатсене хупнă. Халё влассем халăх партийён центральнăй комитечён органне «Рахбар» хаçата, профсоюзсен центральнăй комитечён органне «Зафар» хаçата, çавăн пекех тата демократиллё «Ферман» хаçата тата «Дарья» хаçат вырăнне тухса тăнă «Ахтар» хаçата хупнă.

ДАМАСК ХУЛИНЧИ ДЕМОНСТРАЦИСЕМ

БЕЙРУТ, декабрён 24-мёшё. (ТАСС). Декабрён 20-мёшёнче Сири столицинче Дамаск хулинче студентсен демонстрацийё пулса иртнё. Демонстрацие пухăннă студентсем Сири çёрёнчен Англи çарёсене те, Франци çарёсене те халех пусă тухса кайма ыйтнă.

Демонстраци пулса иртнё кун пур пасарсем те хупнă пулнă.

ИНДО-КИТАЙРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, декабрён 23-мёшё. (ТАСС). Рейтер агентствин Сайгонри (Индо-Китай) специальнăй корреспонденчё пёлтернё тăрăх, союзниксен корреспонденчёсем çапла çырнă: аннамитсен отрячёсемне çапăçакан Франци çарёсем çынсене пёлереççё тата çаратаççё, тенё. Халё Франци власёсем çав ёçе йёрлесе тёпчеççё.

Австрали корреспонденчё çак кунсенче Сайгонран 18 миля хёвеланăçнерехре лараканă Дюк-Холран килнё. Çав вырăнта çак эрне пусламăшёнче Франци çарёсем аннамитсен отрячёсемпне çапăçнă. Корреспондент çырнă тăрăх, вăл Франци корреспонденчёне пёрле офицерсен клубне пынă, вăл унта полици офицерё тытăкăна лекнё аннамит çар çыннине бамбук патакпа хёненине курнă, хёненине французи çарёнчи офицерсем пăхса тăнă. Аннамитсен тытăкăна лекнё çар çыннин пуçё пётёмпех юнланса пётнё пулин те, вăл аннамитсен çар отрячёсем çинчен нимёнле хыпар та пёлтерме килёшмен. Вара тăлмачă патак илнё те çав тытăкăна лекнё çар çыннине икё урине çапса хуçнă. Çакăн хыççăн çав çынна хире илсе тухнă та пуçёнчен икё хут пăшалпа персе вёлернё. Аннамитсен тытăкăна лекнё икё çар çыннине, хăрата-хăрата, çак малтанхи аннамита хёненине тата персе пăрахнине пăхтарса тăратнă. Тепёр корреспондент çапла пёлтернё: французсен пёр офицерё тытăкăна лекнё аннамитсене пере-пере пăрахнипе мухтаннине эпё хам та илтнё, тет.

ИНДОНЕЗИРИ ÇАПАÇУСЕМ

ДЕЛИ, декабрён 24-мёшё. (ТАСС). Дели хулинчи радио çапла пёлтерет: Батави Голландин «Тромп» ятлă крейсерё пырса çитнё. Англи типёс-çар флочён йывăр тупписем Семаранг районёнче индонезиецсен позицийёсене çёнёрен пеме тытăннă.

ФРАНЦИ ÇАРЁН ЙЫШЕ

ПАРИЖ, декабрён 24-мёшё. (ТАСС). Хальхи вăхăтра Франци çарне организацилес ёç пырать. Çакна май декабрён 22-мёшёнче пулнă пресс-конференцире информаци министерстви представителё Франции хёçпăшаллă вăйёсен йышне чакарни çинчен каласа панă. Сарăн (çёр çинчи вăйсен) пётём йышё 500.000 çын пулмалла (вёсенчен 105.000 çын—Метрополире, 100.000 çын—Сурçёр Африкăра, 120.000 çын—Германин Франци оккупацилене зонинче, 120.000 çын — колонисенче тата Инçетри Хёвелтухăçёнче. 55.000 çын—жандармерире).

Хёçпăшаллă вăйсен аслă комсоставён канашлăвёнче Франци тинёс-çар флотёнче 65.000 çын тытса тăма палăртнă. Февралён 1-мёшёччен çартан 100.000 çынна киле яраççё. Кунсăр пуçне, çитес 3—4 уйăх хушшинче 25.000 офицера киле яраççё. Çав канашлурах çапла пёлтернё: хальхи вăхăтра Индо-Китайра Франци салтакёсем 25.000 çын шутлаççё, тенё. Канашлура пулнă çынсенчен пёри çапла каланă: французсен 70 процентчё «халăхпа çыхăнса тăракан» çар туса хуртарасшăн, тенё.

Франци çарён йышне çапла чылăях чакарни Франци умёнче экономика тёлёнёнчен пысăк йывăрлăхсем тăниччен килет, тесе каласçё.

ФРАНЦИ МИНИСТРЁСЕН СОВЕТЁНЧЕ ТЁРЛЁ ШУХĂШЛАНИ

ПАРИЖ, декабрён 24-мёшё. (ТАСС). Промышленность производствипи министрё электричество энергийё тăвас ёçе национализацилемелли проект çырса хатёрленё. Анчах, электричество компанийён акционерёсене, çав шутра ют çёршывсенчи акционерсене, мёнле майпа тата мён чухлё укçа тÿлемелли çинчен министрсем тёрлё шухăшлана пирки, çав проекта министрсен совечён юлашки якё лараввёнче пăхса тухман.

Ёç конфедерацийё декабрён 21-мёшёнче йышăннă решенире çапла каланă: кредит учрежденийёсене национализацилес ёçе форма енчен çеç тăвас хăрушлăх пур. Национализацилене банксен официальнăй представителёсем пулса ёçлеме банк деятелёсене тата «уйрăм çынсен интересёсемшён тăрăшакансене» лартаççё. Çапла туни национализацилес ёçе пăсма пултарать

КАÇСЕРЕН ТУХСА ТĂРАКАН ХАÇАТСЕН ТИПОГРАФИЙЁСЕНЧИ ЗАБАСТОВКА

ЛОНДОН, декабрён 24-мёшё. (ТАСС). Рейтер агентстви Парижран çапла пёлтерет: Парижри кăçсерен тухса тăракан мёнпур хаçатсен типографийёсенче ёçлекен рабочисемпне служащисем декабрён 22-мёшёнче кăçхи забастовка пуçласа янă. Париж хулинче кăçхи хаçатсем пёри те тухман. Забастовка «Франс суэр» хаçат типографийёнче пуçланса кайнă. Унти рабочисем ёçукçине хăпартма пытса хумханма пуçланă. Ытти хаçатсен типографийёсенче ёçлекен рабочисемпне служащисем «Франс суэр» хаçат типографийёнче ёçлекенсемпне пёр кăмăллă пулса ёçлеме пăрахнă.

ÇЁРКĂМРĂК ПРОМЫШЛЕННОСНЕ НАЦИОНАЛИЗАЦИЛЕССИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ЗАКОНОПРОЕКТ

ЛОНДОН, декабрён 21-мёшё. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пёлтерет: Англин топливăпа энергетика министрё Шинуэлл декабрён 19-мёшёнче общинăсен палатине çёркăмрăк промышленноçне национализацилесси çинчен калакан законопроект тăратнă.

УРУГВАЙ ПАНĂ НОТА ÇИНЧЕН МЁН ÇЫРАССЁ

НЬЮ-ЙОРК, декабрён 23-мёшё. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентстви пёлтернё тăрăх, Сальвадорăн ют çёршыв ёçёсен министрё Эскобар çапла каланă: Уругвай урăх çёршывсен ёçне коллективăн хутшăнасси çинчен панă нотăна Сальвадор ырламасть, тенё. Сальвадор çапла шутлать: урăх çёршывсен ёçне хутшăнмалла марри çинчен калакан принцип—Америкăри çёршывсем хушшинчи мирлё тата тăванла сыхăнусен тёп никёсё пулса тăрать, тенё.

ВИТО МУССОЛИНИЕ ТЁРМЕРЕ ХУПСА УСРАМАЛЛА ТУНĂ

РИМ, декабрён 24-мёшё. (ТАСС). «Луче» пулнă Муссолинин тăваннe—Вито Муссолинине Миланри присяжнăйсен сучё 14 çул хушши тёрмере хупса усрамалла тунă. Вито Муссолини фашистла партин Миланра тухса тăнă «Пополо д'Италиа» хаçатён директорё пулнă, ăна «фашистла режима пулăшнăшăн» айăплана. Анчах та суд Вито Муссолинине тепёр преступленишён—тăшманпа сыхăну тытнăшăн наказани паман.

ЦДКА КОМАНДИ ЮГОСЛАВИРИ «ХЁРЛЁ ÇАЛТАР» КОМАНДИПЕ ТЁЛ ПУЛСА ВЫЛЯНИ

БЕЛГРАД, декабрён 24-мёшё. (ТАСС). Ёнер Югославире совет футболисчёсен ЦДКА командине Югославин «Хёрлё Çалтăр» команди хушшинче юлашки матч пулнă. Вăйăра совет футболисчёсем 3:1 шутпа çентернё.

ГРЕЦИ ЮГОСЛАВИ РЕСПУБЛИКИНЕ ЙЫШĂННĂ

ЛОНДОН, декабрён 24-мёшё. (ТАСС). Рейтер агентстви Афины хулинчен çапла пёлтерет: унта официальнăй йёркепе Греци Югослави республикине йышăнни çинчен пёлтернё.

24 тёрлё продукци

КАНАШ. Ёçлыннисен куллехи ыйтăвёсене тивёстерес майпа ал-какай комбиначён коллективё производствăран юлакан япаласенчен ёççыннисем валли 24 тёрлё куллен кирлё таварсем туса кăларма тытăннă. Çав таварсен шутёнче: супăньсем, тёрлё эмельсем тата ытти-сем те пур.

Комбинат çулталăкри производство планне ноябрён 28-мёшё тёлнех тултарнă. СССР Верховный Совет суйлавёсем ячёпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, комбинат коллективё суйлав кунё тёлне планран иртнерсе 160 пин тенкёлёх продукци туса кăларма обязательство илнё. Халё рабочисем хăйсен ёçри хастарлăхне ÿстерсех пыраççё. Комбинатра уйрăмăнах колбаса тăкакан цехра пысăк формăллă производствăсем те пынă (Хирою, Орлов-Шуçăм т. ыт. те), анчах та вёсем ёçё харăрхăй теллен пулса пынă, организацисем ăна тăрăкан предприятисен куллен кирлё таварсем туса кăларас вырăнне хăшпёр промкомбинатсемпне артельсем çăмăлтарах та хăйсене усă парахнан таварсем туса кăларса плана тултарма пăхаççё. Государствăна хирёçле çакăн пек практикăна пётерес пулать. Вырăнти промышленность предприятийёсен ёçне хаклană чух плана укçатенкё çинчен мёнле тултарнине кăна мар, туса кăларахнан продукцин ассортиментчёпе пахалăхё мёнлине те шута илмелле.

Куллен кирлё таварсем хакне пилăртас ёçре çирён йёрке тăвас пулать. Таварсем Пётём Союзра йышăннă хакёсем çук пулсан, пирён Чăваш республикинче вёсене Совнарком кăна пилăртса нама пултарать. Çак йёркене хăшпёр райсовет исполкомёсем пăсса пыраççё. Вёсем, таварсен хакне хăйсем нёлё пек хакласа, Совнарком йышăннă тёрёс хакран чылай ÿстерсе яраççё.

Час-часах тата таварсен хакне предприятисемпне суту-илÿ организацийёсем хăйсем те хаклатса яраççё. Вырăнти промышленноçна кооперацн промышленноçёнчи предприятисен хăйсен тупăшне ÿстерес тесе, материалсемпне чёртавара перекетлён тытказламалла, таварăн хакне чакарса ныpac пулать; тупăна таварăн хакне ÿстерсе янипе пухса пыни вăл—вырăнсăр янала.

Вырăнти промышленноçна кооперацн промышленноçё лайăх ёçлесси ёççынни депутачёсен райсовет исполкомёсемпне парти райкомёсем тёплён ертсе пыни-нчен те пумай килет. Анчах та, калас пулать, чылай районсемпне хуласен руководителёсем вырăнти промышленноçна кооперацн промышленноçё çине çиелтен пăхаççё, вёсене иккёмёш вырăна хураççё. Акă, тёслёхрен, Советски районри вырăнти промышленность кăçалхи 9 ушăх хушшинче пурё те 48 пин тенкёлёх кăна продукци туса кăларнă. 10 ушăх хушшинче вăл иртнё çулхи çав вăхăтрнчен 10 процент сахалтарах продукци панă. Кооперацн промышленноçё 190 пин тенкёлёх продукци парас вырăнне кăçал нурё те 92 пин тенкёлёх кăна панă, иртнё çулхинчен 26 процент сахалтарах туса кăларнă. Районри 4 предприятирен плана пёрн те 56 процентран мала тултарайман.

Куллен кирлё таварсем туса кăларас тёлёпне Хёрлё Чутай, Ишлей, Елчёк, Тăвай, Шăмăршă районёсемпне Улатăр хули те çителёксёр ёçлеççё. Асăннă районсен руководителёсем вырăнти промышленноçна кооперацн промышленноçне çаплах çителёксёр ертсе пыраççё. Вырăнти промышленноçна кооперацн промышленноçне ертсе пырас тёлёпне Çёмёрле, Комсомольски тата Йёпреç райсовет исполкомёсем те янăх ёçлеççё. Ку районсенче те плана тултарайман, IV-мёш кварталта та ёçе лайăхлатни сизёнмест. Сăмахран, пёр-пёр предприятне ёç вăй, чёртавар е топливо çитмесен, район руководителёсёр пуçне урăх камха чăн-чăн пулăшу пама пултарăр?

Район руководителёсем вырăнти промышленность предприятийёсене тата кооперацн промышленноçён артелёсене ёç вăй парса пулăшмасёр пуçне, рабочисем нурнăçна йăла условийёсене лайăхлатассишён те çине тăрса ёçлемелле. Ку ыйтăва вара хăшпёр районсен руководителёсем манаçа хăварнă.

Уйрăм районсен ёçё пире çакна кăтартса парать: районри организацисем куллен кирлё таварсем туса кăларас тёлёпне тимлён ёçленё çёрте продукци туса кăларас план та тăлăшах пурнăçа кёрсе пырать. Вăрмар районё кăçалхи 10 уйăхри плана районри промышленность тăрăх 107 процент, кооперацн промышленноçё тăрăх 102 процент тултарнă. Вырăнти промышленноçна кооперацн промышленноçё Етёрне, Сёнтёр районёсемпне Канаш хулинче те начар мар ёçлеççё.

ВКП(б) райкомёсемпне райсовет исполкомёсен вырăнти промышленноçна кооперацн промышленноçён ёçё çине çиелтен тата хаклamасăр пăхассине пётерес пулать. Вёсен хăйсен ёçне промышленность ыйтăвёсемпне тата унăн интересёсемпне таччăн сыхăнтарса туса пымалла. Предприятисемпне артельсене ертсе пырас ёçе тёпрешех лайăхлатмалла, вёсенче партипе комсомол организацийёсем туса, производствăри чи лайăх çынсене парти тата комсомол ретне явăстармалла.

Рабочисем валли вăхăтрaн вăхăта лекницем туса памалла, клубсемпне хёрле кётессен ёçне лайăхлатмалла. Партипе совет организацисем тимлён тата куллен пулăпса пыреан кăна вырăнти промышленноçна кооперацн промышленноçё куллен кирлё таварсем туса кăларасси пе хăвăрт ÿстерёç. Кунăр пуçне, райсовет исполкомёсен пысăкрах ялсенче райпромкомбинатсене пăхăнакан ялти промкомбинатсем организацилемелле. Пирён условисенче ялти промкомбинатсене транспортпа лаша хатёрёсем, урана тăхăнмалли япаласем, тумтирсем, тунă тирсем, сётел-пукансем, ялхуçалăх продукчёсенчен ёçме-çимесем, тикётпе урапа маçёсем тата ытти куллен кирлё япаласене: урапа-çунасемпне ытти инвентарьсене çителёклё тараш илёç.

Вырăнти промышленность вăл подсобнăй промышленность мар, вăл хăйне уйрăм промышленность. Унăн вырăнти чёртаварсенчен ёççыннисене куллен кирлё таварсем туса кăларас задачăна хăй тёллён пурнăçламалла. Çак задачăна пурнăçланă çёрте вара Союза пăхăнакан заводсен вырăнти промышленноçна техникăллă пулăшу парса тăмалла.

Халё эпир кустарлă майсемпне, алăпа ёçленипне кăна килёпме пултаймастпăр, пирён механизацилле майсемпне тата малта пыракан техникăн çитёнёвёсемпне анлăн усă курас задачăна ытларах та ытларах пурнăçласа пымалла.

Предприятисемпне артельсенчи учетпа отчет ёçне, хуçалăх расчечёпне финанс хуçалăхне сÿллё вырăна лартмасăр ёçре пысăк çитёнÿсем тума çук. Ку ыйтусем çине вара халăхи вăхăтра хăшпёр предприятисемпне артель руководителёсем ытла та сахал çаврăнса пăхаççё. Предприятисемпне артельсем тёрлё йышши тăкаксем курни, вёсен пурлăхне салатни тата çаратни çакăнтан килет те ёнтё.

Куллен кирлё таварсем ытларах туса кăларас ёçе халăхăн анлă массине активлăн янăстарас пулать. Çавăнпа та ёççыннисем валли политикăна воспитани ёçне куллен туса пырасси, рабочисен нурнăç условийёсене лайăхлатасси тата производствăлла канашлу ёçне чёртсе ярасси предприятисемпне артельсем умне халăхи вăхăтра уйрăмăнах çивёччён тухса тăраççё. Ку енёпе вара çак промышленноçенче партипе совет организацийёсем куллен ёçлес пулать.

Халăхи вăхăтра пирён çёршывăн пётём халăх, коммунистсен партийё тата хăйён юратнă çулпуçё Сталин юлташ тавра нихăçанхинчен те таччăнрах пётёçсе, СССР Верховный Советне сÿлама хатёрленет. Совет халăхё сÿ